С (чув)
Т88
н31287-чув

# Валери Туркай




# Ҫӑлкуҫ ҫути



# Валери Туркай



# Çăлкуç çути

СĂВĂСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1989

ББҚ 84 Чув 7—5
Т 88

ПРОВЕРЕНО
2010,17

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Туркай В. В.**
Т 88 Çăлкуç çути: Сăвăсем.— Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989.—63 с.

Кĕнекери сăвăсенче паянхи пурнăçа тасатса чĕрĕлĕх кӳрекен варкăш уççăн сывлани сисĕнет, çамрăклăхăн хĕрӳлĕхĕ хĕмленсе тăни палăрать. Çамрăк автор, хăйĕн чăн пурнăçри вырăнне, тĕллевне шыранă май, чун-чĕринчи хире-хирĕçлĕхне те пытарса тăмасть. Сăмаха тӳррĕн, уççăн калать.
«Çăлкуç çути» — сăвăçăн пĕрремĕш кĕнеки.

**ББҚ 84 Чув 7—5**

**Т $\frac{4803710202-009}{М\ 136(03)-89}$ 73—89**

М-31287-чув

ISBN 5—7670—0183—9

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

# *КУ —*
# *МАН ÇАНТАЛĂК*

*Çĕн сывлăш, вĕр!*
*Çĕн сывлăш, вĕр!*

Çеçпĕл

*И çил вĕрет, çил вĕрет те,*
*çил çĕклентерсе ярать...*

*Çил çĕклентерсе ярать...*

*Çил — çĕкленӳ.*
*Çил — аркату.*
*Çил — тасату.*
*Çил — çĕнетӳ.*
*Кил!*

* * *

Ку —
ман çанталăк!..
Çил-тăман
асар-писер çавăрттарса,
Антăхтарса,
ăнран ярса,
Тĕлли-паллисĕр алхасса,
Хăй вăйăипе киленнĕ чух —
Эп хам та,
çил-тăман пулса,
Тӳпе каварлăхне манса,
Тĕнчен кăра пăлхавçи пек
çӳретĕп
тĕксĕм урамра!

Ку —
ман çанталăк.
Эп ăна мĕн чухлĕ кĕтнĕ!
Мĕн чухлĕ тилмĕрнĕ ăна
часрах килсе чуна уçма.
Вăл килессе ĕненнĕрен
ман чĕрере сӳнмен хĕлхем.

Ку —
ман çанталăк...
Тинĕс пек
тӳпе урса кайса улатăр!
Хум хыççăн хум çапмассерен
ултав керменĕсем арканччăр!

Хупланччăр сăнсăр палăксем,
Çĕрĕшнисем
    ӳксе саланччăр!
Тасалтăр нишлĕх Çĕр çинчен,
Çĕн Кăмăл
    Çĕнĕ Кун
        çураттăр!

Ку —
ман çанталăк!
Аранах
    эп уçă сывлăшпа сывлатăп.
Пăхатăп тăвăл куçĕнчен,
Ун умĕнче тупа тăватăп:
Тасалăх,
    Чăнлăх ячĕпе
ялан кĕрешӳре пулатăп!

Эй,
Тăвăл!
    Тăвăл!
        Вирлĕрех!..
Эс —
ман Çанталăк!

* * *

Суя кулăсем,
суя туйăмсем,
суя ĕмĕтсем,
суя чăнлăхсем
хура çĕмренсем пек
тăрăнатчĕç чуна,
кăрлач шартлами пек
шăнтатчĕç юна.

Суя кулăсем,
суя туйăмсем,
суя ĕмĕтсем,
суя чăнлăхсем
пуçларĕç пулас
ерипен сирĕлме —
хĕвел
пикенет
чăнласа хĕмленме.

* * *

Ик енче — ик чăнлăх.
Варринче — чĕре,
тĕттĕме çурса
çунакан чĕре.
Ик енче — ик çиçĕм.
Варринче — куççуль,
вилтăпри çине
ӳкекен куççуль.
Ик енче — ик пурнăç.
Варринче — асап,
ĕненме, тӳсме
хистекен асап.

*  *  *

Эп —
Вĕçевçĕ Голландец.
Аслă тинĕсĕн çутă карапĕ.
Ман тавра шур хумсем ахăраççĕ —
ман чи çывăх, чи чăрсăр туссем.
Эп вĕçетĕп.
Эп çиçĕм пек çивĕч.
Кăнтăрла та, çĕрле те — çулра.
Камшăн — çăлăнăç,
камшăн — хăрушлăх.
Кам — кĕтет,
кам — чĕтрет шикленсе.
Асăрханăр,
мĕскĕн чунсем!
Чысăра шуйттана сутнисем!
Ман умра пурпĕрех тытма тивĕ
Аслă тинĕсĕн тĕп явапне!
Асăрханăр!—
темле тăрăшсан та,
çук, тараймăр манран пит инçе,
пытанаймăр хура хум хыçне,
çухалаймăр тĕтре ăшĕнче!
Эпĕ — Чăнлăх!
Эпĕ — Тасалăх!
Аслă тинĕсĕн çутă карапĕ.
Эпĕ —
Тинĕс чысне упраканĕ.
Эпĕ —
Тинĕсĕн харсăр тӳри!

* * *

Пин тӗрлӗ шухăш ӗшнинче
эп хамăн шухăша усратăп.
Сив çил улать-и, тăм ӳкет-и —
шухăшăма шанма памастăп.

Пин тӗрлӗ кăмăл хирӗнче
эп хамăн кăмăла усратăп.
Ăрша вылять-и, çӗр типет-и —
кăмăлăма хăрма памастăп.

Пин тӗрлӗ ӗмӗт шевлинче
эп хамăн ӗмӗте усратăп.
Тӗттӗмленет-и, çуталать-и —
ӗмӗтӗме сӳнме памастăп.

Пин тӗрлӗ пурнăç пахчинче
эп хамăн пурнăça усратăп.
Ирпе Хӗвел тухмассерен
эп çӗнӗ Куншăн савăнатăп.

**ТĂВАН ÇӖРШЫВĂМ, ПУРĂНСАМ!**

Инкек çине синкек сиксе тухсассăн,
сӳнес патнех çитсессӗн вут чӗрем,
асап çӗклемӗ пилӗке авсассăн,
тӗллевӗм пулӗ ман пӗрре:
Тăван çӗршывăм, пурăнсам!

Ӳт-пӗвӗм çӗнӗ хăватпа тулсассăн,
чӗре тивсе çиçсессӗн çӗнӗрен,
малтан-мала çут çăлтăр илӗртсессӗн,
тӗллевӗм пулӗ ман пӗрре:
Тăван çӗршывăм, пурăнсам!

* * *

Ҫайри пулма нихҫан та килĕшместĕп:
Ҫайри пулма килмен эп тĕнчене.
Ҫĕрешӳре-ĕҫре мала тухмасăр
Сӳнме ан хăй, ман канăҫсăр чĕрем.

Мала тухма нимрен те шикленместĕп:
Антăлу ҫеҫ чуна савăнтарсан,
Тивĕҫĕмпе тĕллевĕм пĕр пулсассăн,
Сехĕрленме сăлтавăм пур-и ман?

Ҫăлтăрсенчен тивсе ҫĕре ҫутаттăр
Тĕттĕмлĕхре йăл илнĕ ман чĕре.
Ҫын суранне курсассăн, чун ыраттăр,
Ҫынпа пайлатăр хăйĕн тивлетне.

Ырра шанса чĕрем тапать хастарлăн,
Ик куҫ тулли — ик чăрсăр ҫут хĕлхем.
Ҫак тĕнчере усал йăлт ҫухалмасăр,
Алла усма епле хал ҫитерем!

* * *

Ҫур ҫын пек ҫеҫ ларассине пĕлсессĕн,
пачах та ларман пулăттăм ҫак лав ҫине.

Тилхепине тытмассине пĕлсессĕн,
пачах та кӳлмен пулăттăм тур лашине.

Пĕр аташми ҫитессине пĕлсессĕн,
пачах та тухман пулăттăм эп ҫул ҫине.

«Ҫитейĕп-ши?»— тесе иккĕленсессĕн,
тӳрех тытса тăварăттăм тур лашине.

**ТАВРĂНУ**

Укăлчаран кĕтĕм, хуллен утрăм.
Урам тăрăх пăхрăм, ассăн сывларăм,
Çуралнă ялăм, кĕтрĕн-ши мана?
Манмарăн-ши? Тиркемĕн-ши мана?
Çуралнă ялăм...

Пус умĕнче — мăшăр витре. Пĕри — тулли.
Теприне Евлен инке тин ăснă шыв ярать.
Çăматăпа хăй. Кивĕ сăхманпа.
Урисене çут пăр çинче асăрханса куçаркалать.
Тăкăрлăкпа ват янавар хăй еккипе юртса иртет,
тулли виç михĕ хунă кив çунана туртса.
Çĕн çăнăхпа шуралнă лавçăсем
мана пуç сĕлтрĕç те кăвак утне васкатрĕç.
Лав умĕнчен ушкăн çерçи, чĕриклетсе,
чăл-пар саланчĕ...

Сисетĕп — тăван кас мана сăнать.
Пăрланнă кантăк витĕр,
хӳме хушăкĕнчен, турат куçĕсенчен.
Ун шухăшне, ун кăмăлне туятăп,
ун сăмахне тимлетĕп пăлханса:
«Эс çакăнта ӳссе çын пултăн,
сан тымару-несĕлӳсем кунта.
Пехил сана, ачам, тăван йăхна манманшăн.
Пехил сана — ютра ху кирлине туйма».

...Хуллен утатăп. Юр кăчăртатать.
Хуллен утатăп. Килĕм çывхарать.
Ик куçăмран ик кантăк тинкерет.

*  *  *

Çаран.
Пăрланнă
чечексен
шупка та халсăр
хĕмĕсем
çут тĕнчере
хăйсем пурри çинчен
аран-аран пĕлтеркелеççĕ.

Халь-халь çĕре ÿкес çеçке
чĕтренчĕ те,
çеçке ÿкессине кĕтсе,
çĕр
çÿлелле
тинкерчĕ.

**КАÇКĂЛЁМ**

каллех
хĕвел
анать

çеçенхирти
çеçке
каç сĕмлĕхне
путать

çеçенхирти
çеçке
çутăласса
шанать

* * *

Ир.
Çăлтăрсем ирĕлеççĕ.
Тĕкĕр-кӳлĕ куççуль пек таса.
Хăмăшсем пĕр-пĕрне перĕнеççĕ,
вĕтĕ-вĕтĕ хумсем кăларса.

Ир.
Çĕрелле усăнаççĕ
сывлăм сыраннă хыр лăссисем,
нӳрлĕ хăйăр çине тăканаççĕ
ыйхинчен вăранман тумламсем.

Ир.
Кĕтӳ хăвалаççĕ.
Юланутçăваскать хирелле.
Кĕтӳçсем ним чĕнмесĕр сăнаççĕ
тин çеç тухнă кĕрен хĕвеле.

* * *

Кассăн-кассăн çумăр çусассăн,
çиçĕмсемпе пĕлĕтсем касăлсассăн,
çĕнĕ çеçке çурăлсассăн çĕрле,
кăмăл та уçă, чун та илпек.

Пур сăмах та тĕрĕс пулсассăн,
чун ăшшипе çынсене ăшăтсассăн,
халăхăмшăн хĕмленсессĕн чĕре,
сăнăм та çутă, кун та тӳлек.

* * *

Ырă кăмăл,
ырă туйăм
сывлăм пек
черченкĕ.

Ырă кăмăл,
ырă туйăм
шуçăм пек
илемлĕ.

Ырă кăмăл,
ырă туйăм
тинĕс пек
мăнаçлă.

Ырă кăмăл,
ырă туйăм
чăнлăх пек
сăваплă.

**ТЕЛЕЙ**

Ĕçме-çиме пурри,
тупра-пухча пурри,
ӳтре вăй-хал пурри —
çурма телей.

Чун савнă çын пурри,
тус-хурăнташ пурри,
атте-анне пурри,
тăван сăмах пурри —
тулли телей.

## ИЛЕМПИ

Чĕппĕм манăн, Илемпи,
эсĕ — манăн çутă куллăм,
эсĕ — манăн ăш хыппи,
чĕппĕм манăн, Илемпи.

Чунăм манăн, Илемпи,
эсĕ — манăн савăк юррăм,
эсĕ — ман чĕре таппи,
чунăм манăн, Илемпи.

Хĕрĕм манăн, Илемпи,
эсĕ — ман шалти тĕрекĕм,
эсĕ — ман кăвак хуппи,
хĕрĕм, чĕппĕм, Илемпи.

* * *

Çĕр çул пурăнасчĕ,
Çĕр çул юратасчĕ,
Çĕр çул пĕр канмасăр
Ĕçре тар тăкасчĕ.
Пин хут çураласчĕ,
Пин хут ман вилесчĕ,
Çапах та нихçан та
Виле пулас марччĕ.

Çунасчĕ вутра та,
Путасчĕ шывра та,
Кĕрлетĕрччĕ çеç манăн пурнăç
Манра.
Çӳле хăпарсан та,
Ӳксе салансан та,
Туясчĕ хама яланах
Пурнăçра!

* * *

Çамрăк йăйăр — çамрăк кăйкăр —
ăмăртатать çилпе.
Шăхăрсан та, уласан та,
çук хуса çитме.

Çамрăк йăйăр — çамрăк кăйкăр —
ирĕклĕх патши.
Çĕр чĕтретрĕ — тăпăр-тăпăр!—
такансен ташши.

Çамрăк йăйăр — çамрăк кăйкăр —
сирпĕтет вут-хĕм...
Тĕлĕнеççĕ, кĕвĕçеççĕ
тăлăллă утсем.

* * *

Такам хушнипе
мухтасассăн,
такам хушнипе
хурласассăн,
такам хушнипе
савăнсассăн,
такам хушнипе
хурлансассăн,
такам хушнипе
юратсассăн,
эпĕ кам пулăп-ши?

## ÇĚНĚ ÇУЛ

Каллех
тепĕр çул
çиçсе ӳкрĕ
Иртнин
уй-хирне,
çăлтăр пек.

Юман
вуллинче
çĕнĕ ункă
хĕссе
çупăрлать
киввине.

* * *

Улăм пĕрчи хуçăлчĕ —
сас пулмарĕ.
Хăрăк турат хуçăлчĕ —
аслати авăтмарĕ.
Мачча кашти хуçăлчĕ —
тăвăл тухмарĕ...

Кăмăл хуçăлчĕ —
кун пăсăлчĕ.
Çĕр тĕнĕлĕ хуçăлсан,
кун та пулмĕ.

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
и 31287-чув

2. Заказ № 1154. 

* * *

*В. Д.*

Ятсăр сăвăçăн пĕчĕк сăвви
чĕрене тивертсе хĕмлентерчĕ.
Тĕлĕнтерчĕ, хăйне ĕнентерчĕ
ятсăр сăвăçăн пĕчĕк сăвви.

Ятсăр сăвăçăн пĕчĕк сăвви
ăсăма, чунăма кисрентерчĕ.
Нимтуйманлăх пăрне ирĕлтерчĕ
ятсăр сăвăçăн ырă сăвви.

* * *

Ултав,
шурлăх евĕр,
мĕн лекет — çавна çăтать,
мĕн çăтать — çавна çĕртет.

Ултав,
шурлăх евĕр,
вăхăчĕ çитсен
пурпĕрех типет

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

*Г. Н. Волкова*

Чăваш чĕлхи —
пĕрремĕш ĕсĕклевĕм,
суранлă чунăмăн
чи юлашки çĕвви —
ăстăнăм вучахне чĕртсе,
пехил парса,
мана чĕрçӳ çинче ӳстертĕн.

Чăваш чĕлхи —
вĕри чĕре таппи —
хĕç-сăнăсем хĕресленсе
хĕмленнĕ кунсенче
таса юнпа хĕрелнĕ,
сив сăнчăрне татса,
çуратнă çĕн сămах.

Чăваш чĕлхи —
ту пек тулли арча —
сан иксĕлми тупру
пурин валли те çитнĕ,
çитĕ те.
Кунран-кун — хаклăрах,
кунран-кун — аслăрах.
Пурнар, чĕлхем,
тăван чĕлхем, пурнар.

**ГЕННАДИЙ АЙХИНЕ**

Шыв ан сапăр
вутпуççи çине,
вăл хăех сӳнет.
Ăшăтасшăн вăл сире
çуннă сĕм-çĕрле.
Çуннă чух
эсир унпа
киленнех пуль-ха,
шăнса хытнă чунăра
ăшăтнах пуль-ха.

Халь вăл сирĕншĕн
тем мар —
сӳнесскер кăна...
Қайăр хăвăр çулăрпа,
ан тивĕр ăна.

Юлтăрах вăл ĕнтрĕкре.
Выртăр хĕмленсе.
Шурăмпуç чĕрĕлессе
илтĕрех кĕтсе.

* * *

Икĕ сăвăç чĕри —
иқ кăра метеор —
пĕр-пĕрне тĕл пулса
тăрăнсассăн,
тĕнчене кисретсе,
тасатса, çутатса,
çĕнĕ çăлтăр
хыпса хĕмленет
тӳпере!

Çĕнĕ çăлтăр
    хыпса хĕмленсен
    тӳпере,
çĕнĕ çутă
    ӳкет Çĕр çине.
Çĕнĕ çутă
    ӳксен ĕнтрĕкри Çĕр çине,
çĕнĕ Сăвăç
    килсе сас парать
        тĕнчере!

**АКĂШСЕН ЮРРИ**

**Пĕчĕк реквием**

**I**

Вĕçрĕмĕр эпир, вĕçрĕмĕр.
Нумай-нумай эпир вĕçрĕмĕр,
                        вĕçрĕмĕр.
Çĕнтĕмĕр эпир, çĕнтĕмĕр,
никам çĕнмен çиле çĕнтĕмĕр,
                        çĕнтĕмĕр.
Ӳкрĕмĕр эпир, ӳкрĕмĕр,
сивĕ тинĕссене ӳкрĕмĕр,
                        ӳкрĕмĕр.
Пĕтрĕмĕр эпир, пĕтрĕмĕр,
хумсем айне пулса пĕтрĕмĕр,
                        пĕтрĕмĕр...

**II**

Тинĕсĕсем кăвак —
        çӳлтен пăхсан.
Анса ларăттăмăр —
        хумсем кăра.

Ĕçĕттĕмĕр шывне
ăш хыпнăран —
Шывĕ тăрă,
анчах çара тăвар.
Çыранĕсем çывăх —
пĕрре пăхсан.
Арша вылять
сенкер тусем çинче.
Çывăххи те инçе,
халран кайсан...
Тинĕсе ишĕлсе анать тĕнче.

III

Пĕлĕтсем
пире
кĕтеççĕ,
Пĕлĕтсем
пире
чĕнеççĕ
Çĕнĕрен
çунат
сарма...
Пĕлĕтсем
тĕксĕмленеççĕ.
Пĕлĕтсем
хуллен вĕçеççĕ
Хум çинчи
шур тĕк
тавра.

## МАН ПӐЛХАР

Эп ватӑ ҫав тери. Истори шурӑмпуҫӗ
Ӑвакарайнӑччӗ — вӑрантӑм ыйхӑран.

П. ХУСАНКАЙ. «Чӑваш»

### I

Эй, тӗррӗмӗр!
Эй, хаклӑ эрешсемӗр,
чун вӑйӗпе илемӗн паллисем,
мӗн чухлӗ вӑрттӑнлӑх,
мӗн чухлӗ аслӑ шухӑш
упратӑр-ши эсир?
Хӑҫантанпа?..

Хӑҫантанпа сире тӗрлет-ши
чӑваш хӗрарӑмӗ, пики?
Мӗне пӗлтернӗ, пӗлтерет-ши
виҫкӗтессем те ҫекӗлсем?

Тен, сирӗнте — шӑпамӑр пирӗн?
Тен, утса тухнӑ ҫул ҫути?
Тен, шухӑ Асамат йыхравӗ?
Тен, вилӗмсӗр Тӗнче палли?..

Эй, тӗррӗмӗр,
эй, хаклӑ эрешсемӗр,
асаннесен сӑваплӑ туприсем,
мӗн чухлӗ вӑрттӑнлӑх,
мӗн чухлӗ аслӑ шухӑш
упратӑр-ши эсир
пире валли?

### II

Уй варринче,
уй варринче — лаштра юман.

Вăл ёмĕрсем улшăннине сахал курман.
Тымарĕсем, тымарĕсем тĕреклĕ ун.
Тымарĕсем, тымарĕсем хăватлă ун.

Уй варринчи,
уй варринчи лаштра юманăн
Тураттисем, тураттисем типсе хăрман.
Юман тавра хунать туйралăх ăмăртса,
Қашни туйри юман пуласшăн хăвăртрах.

Уй варринчи,
уй варринчи лаштра юман
Çавраçилсем, пăр-çумăрсем сахал курман.
Хаярлăхпа каварлăха вăл парăнман,
Тăвăлсене савăнтарса, вăл хуçăлман,
Уй варринчи,
уй варринчи лаштра юман.

III

Қĕрлет вут-çулăм.
Юн юхать.
Этем пуçне
этем касать.
Қĕрлет вут-çулăм.
Халсăра
вăйли вăйпа
тăвать чура.
Тăшман хаяр.
Тăшман тискер.
Тума вăл хатĕр
темĕскер.

Қĕрлет вут-çулăм.
Паттăрсем —
мăнаçлă,

харсăр кăйкăрсем,
тăшман çулне пӳлекенсем,
тан мар вăйпа тытăçнисем —
ӳкеççĕ юнлă çĕр çине,
хупса хăюллă куççене.

Кĕрлет вут-çулăм.
Пăлхарта,
тархасласа Пихампара,
ватти-вĕтти чĕркуçленет,
пур çын та пулăшу кĕтет.
Тăшман касать.
Тăшман ваклать.
Аллисене юнпа çăвать.

Кĕрлет вут-çулăм.
Çичĕ ют,
темрен каçса кайса кулса,
ахăрашса, çухăрашса...
кĕнекесем перет вутта.
Кĕнекесем,
кĕнекесем,
кĕнекесем перет вутта.

...Вĕсем хыпаççĕ те çунаççĕ.
Вĕсем выртаççĕ шăранса.
Унтан çилпе вĕçме пуçлаççĕ,
кĕреççĕ хушăран куçа...
Чăвашăнне
кĕнекине
çиет ылханлă вут-ĕне.

Пăлхар çунать.
Аманнă халăх
тупасшăн хӳтлĕх
хăтăлмалăх.

«...Эй, ырă пӳлĕх, Пихампар,
хăв халăхна пĕтме ан пар...»
...Пăлхар пушанчĕ.
Ҫаç.
Хĕвел, юнпа хĕрелнĕскер,
çухалчĕ...

IV

Ырхан хресчен.
Ырми ĕçчен.
Тарпа саралнă шур сухал.
Тумхахлă çĕр.
Тырпулсăр кĕр.
Алран кайми ака-суха.

Хĕвел тухать,
Хĕвел анать —
Хресчен каç сĕмлĕхне путать.
Хĕвел анать,
Хĕвел тухать —
Хресчен каллех акма тухать.
...Асаплă çĕр,
Сăваплă çĕр,
Ма шеллеме пĕлместĕн эс?
Мухтав сана,
Пехил сана —
Чăвашăн шанчăкĕ эс çеç.

V

Лаштра юман çинче — йăва.
Ăна ишеймĕ урнă çил.
Упрать вăл çĕнĕ ăрăва,
Упрать çĕрле те, каç та ир.

Лаштра юман ҫинчи йӑва
Пӗр пушанать те пӗр тулать.
Пехил парса ҫӗн ӑрӑва
Вӑл ӑсатать инҫе ҫула.

## VI

Ҫӳлте-ҫӳлте вӗҫет ҫап-ҫамрӑк кӑйкӑр,
Хӗвел тавра хӑюллӑн ҫаврӑнать—
Қӑра куҫсем, вут хыпнӑ харсӑр кӑкӑр
Тата мӑнаҫлӑн сарнӑ ик ҫунат.

Ҫӳлте-ҫӳлте вӗҫмешкӗн теветкеллӗ —
Ҫӳлтен ӳкме пит ҫӑмӑл та ансат.
Анчах вӑй пур чухне ҫиле ҫӗнмелӗх
Кам хӳтлӗхре ларайӗ лӑпланса?

Ан тив, тӳпе хӑш чух ытла каварлӑ,
Ан тив, ҫӳле кармашакан нумай —
Тивӗҫсӗрри кураймӗ пархатарлӑх:
Пӳрмен пулсан, май ҫук ҫӳлте юлма.

Ҫӳлте-ҫӳлте вӗҫет ҫап-ҫамрӑк кӑйкӑр,
Хӗвел тавра хӑюллӑн ҫаврӑнать.
Тӳпе тулли — пӑлхавлӑ харсӑр кӑкӑр
Тата мӑнаҫлӑн сарнӑ ик ҫунат.

## VII

Эп — ҫӗн чӑваш.
Эп — иртнӗ кун эткерӗ.
Эп ҫӗнӗлле куратӑп тӗнчене.
Ман сассӑмра —
пинҫуллӑхсен кӗрлевӗ,
Ман таврара —
пуласлӑхӑн калчи.

Эп — ҫӗн чӑваш.
Мана Иртни ҫуратрӗ —
асапланса,
ҫапах та юратса.
Вӑй-хӑватне мана пиллерӗ Улӑп,
Ҫӗрелӗхне пиллет Лаштра Юман.
Эп — ҫӗн чӑваш —
ҫӗн ӗмӗтпе тытатӑп
алран кайми акийӗ-сухине,
Таса чунпа эп пуҫӑма таятӑп
асран кайми аттийӗ-аннине.
Эп — ҫӗн чӑваш.
Эп хӗвелпе хӗмлентӗм,
ыр кӑмӑлпа килсе
инҫетлӗхрен.
Ман тивӗҫ пур
ӑраскала тупмашкӑн.
Ман тивӗҫ пур
Малашлӑха утма.
Эп — ҫӗн чӑваш.
Эп — иртнӗ кун эткерӗ.
Эп — ҫӗн чӑваш.
Эп — ҫӗнӗ кун элчи.

**ТУПА**

Юлашки юн тумламӗ сӑрхӑнса пӗтиччен
санпа эп пулӑп, халӑхӑм.

Юлашки вӑй-халӑм сӗврӗлсе пӗтиччен
эп саншӑн ӗҫлӗп, халӑхӑм.

Юлашки ӗненӗвӗм ӗнсе пӗтиччен
сана ӗненӗп, халӑхӑм.

Юлашки кӗрешӗвӗм, юлашки ҫӗнтерӗвӗм —
сана, ТАВАН ХАЛӐХӐМ.

**ЭП —**
**УТРАВ,**
**ЭС —**
**ТИНЁС**

*Ольйана*

*Мана савсан,*
*ман килёме те сав.*

*Мана савсан,*
*ман аннене те сав.*

*Мана савсан,*
*ман ёҫёме те сав.*

*Мана савсан,*
*ман ёмёте те сав.*

*Мана савсан,*
*хăвна та*
*манран кая ан сав.*

* * *

Ёнер кăна
эс
тухъяпаччĕ.
Паян, ак,
тăхăнтăн
хушпу.

Ёнер
черчен çеçкеччĕ
эсĕ.
Паян —
çут сывлăмлă
чечек.

* * *

Çав каçхине
ман кантăкран
пăхмарĕ уйăх та —
вăтанчĕ,
ытла аванмарланнăран,
кăвак чаршав хыçне пытанчĕ.

Çав каçхине
савни мана
хăй ытамне илсе лăпкарĕ...

* * *

Сана чуптумашкăн хăюлăх ҫитмерĕ.
Ķавар пек вĕри пĕрлĕхен-тутуна
(сисетчĕ чĕрем)
ăнсăртран перĕнсессĕн
эп хамăн хĕлхем-тутапа,
ман чун, вулкан евĕр,
вăранĕ те, шелсĕр,
пире, иксĕмре, кĕллентерĕ пушар...

Айван... Ҫунасран эп хăрапă,
упрасшăн чĕрем канлĕхне-ыйхине...
Санран тарнăҫем ытларах кĕллентернĕ
текех тивес ҫук
вучах-чунăма.

* * *

Савниҫĕм, ытала мана,
Тинкер ман куҫăмран.
Унта эс курăнах хăвна —
Эс ҫеҫ ман асăмра.

Савниҫĕм, ачашла мана,
Эп антăхса каям,
«Телейĕм манăн эс кăна»,—
Тесе пуҫа таям.

Ķала, кала: «Ĕмĕрлĕхе
Пулатпăрах пĕрле...»
«Ĕмĕрлĕхе, ĕмĕрлĕхе»,—
Хуравлĕ ман чĕре.

## ТЕЛЕЙ ТУМЛАМĔ

Сан
ыйхăллă ç̆ӳçӳн
сисĕмлĕ пĕрчисем çинче вылякан
ылтăн хĕмсем
сан илĕртӳллĕ сăнарна
харăсах пин-пин тĕспе ялкăшакан
шурăмпуç-пĕркенчĕкпе витеççĕ.
Сан
хăмăр куçун
хăрăм пек хура хăрпăкĕсенчен
асăрханса, йăвашшăн ӳкекен
ик авăнчăк ĕмĕлке
ман куççулĕмсен ӳпкевлĕ çутинчен
тара-тара пытанать.
Сан
çап-çамрăк юн ваййине пула
хĕрелсе ăшăннă питне,
хĕмлене-хĕмлене халран кайнăран,
кăшт тĕксĕмленнĕ тунсăхлă çăлтăрсем пек,
сырса илнĕ хуратутсем
ман шуранка сăнăмăн асапĕпе киленеççĕ.
Сан
сасартăках мĕн кĕлленсе пĕтиччен
ялкăшма-çунма шут тытса,
тепĕр хут амаланма пикеннĕ
вутпуççин кĕрен кăварĕ пек вĕри туту
ман кушăрханă тутана перĕнет...
Пирĕнпе юнашар, аслă кĕвĕ пек ырă чĕмсĕрлĕхре,
çурхи хĕвелĕн шухă, çăмăл çутине
ĕмĕрлĕхех ыталаса илнĕ айван тумлам
хăйне малта мĕн кĕтнине пĕлсе тăрсах,
каварлă та çăткăн тĕтрен
кăпăшка сийĕпе пĕркеннĕ,
ерипен ăшăнса пыракан çĕрелле ыткăнать.

* * *

эп утрав
эс тинĕс
      ăшă тинĕс
эп чулланнă
      пушă та кичем
эс ачаш шевлесемпе çиçетĕн
      ăш хумсем ярса ман çырана
эс каллех ман ыйхăма сиресшĕн
эс манпа пайласшăн телейне

эс çакна çеç темшĕн ăнланмастăн
      эп утрав
эп сан тыткăнунта

* * *

Эс ăнтăлнă кĕрхи хурăнлăха
эп сансăр çитрĕм те —
сана асилтĕм.

Сан ĕмĕтне эп куртăм çывăхран,
анчах шала кĕмешкĕн
хăяймарăм.
...Кирек ăçта çитсен те, эпĕ сансăр
сан ĕмĕтӳ умне
пырап тухап.

* * *

Қилсем, килсем!
Ăçта çӳретĕн эсĕ?
Туймастăн-им,
сана кĕтсе,
эп тунсăхпа антăхнине?

Илтсем, илтсем
салху та вăйсăр сассăма,
эп сан ятна
    пăшăлтатса,
асăрханса та тĕлĕнсе,
    тархасласа та киленсе
        каланине илтсем!

Пĕлсем, пĕлсем:
çук, пурпĕрех
    ман чĕрере тек сӳнмĕ шанчăк.
Сана эп кĕтĕп ĕмĕрех.
    Сана çеç кĕтĕп —
шăла çыртса,
    ӳпкевсĕр,
        наймкăшмасăр.
Никам та пĕлмĕ,
    ăнланаймĕ
    сана епле эп
    кĕтнине...

Мĕнех, юрать,
    юрать...
    ан кил,
тархасланин усси ан пултăр.
Эп чăтăп.
Çунтăрах чĕрем.
Сахал çунман вăл хăй ĕмĕрĕнче.

Сахал тӳсмен.
Ҫакна та тӳсӗ...
Анчах та пӗл,
тархасшӑн, пӗл:
санпа пӗрле ман ӑраскал ҫӳрет.

Ӑҫта шырас-ши ман
сире?
Епле тупас сире?

* * *

**Сана** шыратӑп.
Йышра.
Хӗвӗшӳре.
Ҫасхи сӗм хупӑрланӑ
вӗҫсӗр урамра...
Сар ҫутӑллӑ хунар
пуҫне усса тӑрать.
Асфальт ҫинче
ҫиҫеҫҫӗ ҫӑлтӑрсем.
Свиридов вальсӗ янӑрать.
Умра хӗреслененеҫҫӗ
чӗмсӗр урамсем.

* * *

Çумăр çунă чух эс килтĕн ман пата,
Тумламсем чĕтретчĕç сар çӳçӳ çинче.

Çумăр çунă чух тинкертĕн куçăмран.
Çумăр тумламне тăрăнчĕ куççуль.

Çумăр çунă чух тăкăннă куççулĕн —
ăнланса илсем — пархатарĕ çук...

Аслати кĕрлет, çут тĕнче хӳхлет —
Вăл та сан пекех тулнă ӳпкевпе.

* * *

Хĕвел çути пек сассăр
эс кĕтĕн килĕме.
Эп тăтăм паллаймасăр
сана, **Тивлетĕме.**

Хĕмленчĕ чун кăвайчĕ,
хĕвел пек, эс килсен.
Чĕрем каллех çуталчĕ,
асапĕ сирĕлсен.

* * *

Эс калатӑн:
сӳннӗ ҫӑлтӑр ҫӗнӗрен тивмест.
Эс калатӑн:
ӗмӗт-ӗнчӗ тӗттӗмре ҫиҫмест.
Эс калатӑн:
вилнӗ туйӑм чӗрӗлмест тепре.
Эс калатӑн:
ӗненӳсӗр пуш-пушӑ чӗре.

Эп калатӑп:
сӳннӗ ҫӑлтӑр тивмӗ ҫӗнӗрен.
Эп калатӑп:
ӗнчӗ-ӗмӗт ҫиҫмӗ тӗттӗмре.
Эп калатӑп:
вилнӗ туйӑм вырӑнне тепри
чӗрӗлет те,
этем чунӗ уҫӑлать яри.
Эп калатӑп:
ӗненӳ пур-ха тӗнчере...
Тӗнчи ҫеҫ ан пӗттӗрччӗ
ҫулӑм-тӗтӗмре.

* * *

Кам сан пек тинкерӗ
манӑн куҫӑмран?
Кам сан пек ӑнланӗ
манӑн юррӑма?
Кам сан пек ним шиксӗр
урнӑ тӑвӑлпа
Кӗрешме пултарӗ
маншӑн манпа тан?
Кам сан пек сиплейӗ
ман сурансене,
Кӗлленме памасӑр
ыр ӗмӗтсене?..
...Тин ӑнлантӑм эпӗ:
ҫакӑ тӗнчере
**маншӑн тек нихҫан та**
**пулмӗ сан пекки.**

Кам ман пек киленӗ
сан илемӳпе?
Кам ман пек ҫунтарӗ
санӑн чӗрӳне?
Кам, сив ҫил тухсассӑн,
хуплӗ хӑйӗнпе
Сан ҫӗн хунав евӗр
ҫепӗҫ тивлетне?
Кам ман пек хӗмленӗ
тӗттӗм каҫсенче
Сан тавра ҫут Кун ҫеҫ
пултӑрччӗ тесе?

...Ӑнлансамччӗ эс те:
ҫакӑ тӗнчере
**саншӑн тек нихҫан та**
**пулмӗ ман пекки.**

* * *

Куçа хупатăп та итлетĕп,
    итлетĕп санăн сассуна.
Вара тинех аса илетĕп
    сан ĕмĕтне, сан куллуна.
Пуçа таятăп та туятăп,
    туятăп санăн ăшшуна...

Эс пур чухне çеç эпĕ — чĕрĕ.
Эс пур чухне çеç эпĕ — Çын.

# *ПУШХИРТИ ХӐЙӐР ПӖРЧИ*

*Тӳпе.*
*Пушхир.*
*Хăйăр пĕрчи.*
*Хĕвел тухать.*
*Пăчă.*

* * *

Тапăртатса тăран тур лашине
кӳлес терĕм ирпе, хĕвел тухсан.
Қаяс терĕм инçе-инçе çĕре,
килес терĕм телейĕме тупса.

Анчах... тур лашийĕ çӳрет çеçенхирте.
Хĕвелтухăçĕнче — хура пĕлĕт.
Инçе çулăм кăна çиçет-çиçет умра.
Инçе çул çути çеç лăпкать săна.

Пуçне ухса тăран тур лашине
кӳлес терĕм каçпа, хĕвел ансан.
Тухас терĕм инçе-инçе çула,
çӳрес терĕм асапăма манса.

Часах тур лашийĕ килсе тăчĕ ума.
Тӳпе тулчĕ кĕрен çăлтăрлăхпа...
Инçе çулăм кăна тек тăсăлмасть мала.
Малта мĕскер?.. Çăра тĕтре кăна.

* * *

Ăçталла каятпăр?
Мĕн шыратпăр?
Мĕн тупассăн туйăнать пире
тата кăшт утсассăн, кăшт тӳссессĕн,
тата кăшт кĕтсен асам-ире?

Ăçталла каятпăр?
Ма сисместпĕр
Янкăр Кушнăн Çĕр хўхленине?
Урана тĕпсĕрлĕхе тăсатпăр.
Ăнланмастпăр çул вĕçленнине.

**ЭЛЕГИ**

Пушаннă пўлĕмре пĕччен ларатăп,
Кичеммĕн тинкерсе чўречерен.
Пурин çинчен те харăс шухăшлатăп,
Тек шухăш пулмĕ, тейĕн, ўлĕмрен.

Ах, çак самант... Çак кăткăслăх, ансатлăх...
Çĕр пин ыйту. Хуравĕ тупăнмасть.
Вăй-халăм çук кулмалăх, макăрмалăх.
Вăй-хал пулассăн та тек туйăнмасть.

Ик куç тулли — кĕрен ката ялтравĕ,
Çур хĕвеле хупланă вĕрене.
Вĕçет хуркайăк. Мăшăр çунат шавĕ
Илтĕнес пек, тимлетĕп тўпене.

Çулне пĕли-пĕлми вĕçмест хуркайăк.
Ик чăнлăх тупрăм ун вĕçевĕнче —
Пĕрре пăхма тўпе çавра та тайлăк,
Пĕрре пăхма кăна ансат тĕнче.

...Пушаннă пўлĕмре пĕччен ларатăп.
Чўречере — сенкер хура ката.

## ЭЛЧЕЛ

Таçтан,
пысăкланса та хуралса,
ман еннелле вĕçет пĕр пăнчă.
Тахçанранпах вĕçет, вĕçет.
Тахçанранпах мана тĕлленĕ
çак пăнчă.
Хураскер.
Ăçта тарас?
Епле ман хăтăлас?
Епле, епле пăрас ăна
тĕлленĕ çулĕнчен?
Хăрушă...
Чĕп-чĕрĕ тар ман ӳтĕм.
Антăхатăп.
Куçăмсене
хуплатăп
алăпа...
Анчах та вăл вĕçет,
вăл çывхарать,
ман пăнчăм,
хураскер...
Пĕлетĕп эп: ку — ман элчел.
Вăл пăрăнмĕ хăй çулĕнчен нихçан та,
çывхарнăçем çывхарĕ вăл ялан.
Хуралнăçем хуралĕ...
Пурпĕрех,
пурпĕрех
эп куçăма хуплатăп.
Тарланă алăпа.
Тарланă алăпа эп чунăма упратăп!

* * *

Шывра
вутпуççисем
ишеççĕ
каçхи
кăвайт
юлашкисем

шывра
вутпуççисем
сӳнеççĕ

чунра
сӳнеççĕ
туйăмсем

* * *

Чие сĕткенĕпе сăрланнă тухăçăн
кĕрен чĕрçи çинчи
пĕртен-пĕр тĕксĕм пĕлĕт...
сасартăк...
кив пуставпа пĕркенĕ тупăк евĕр
курăнчĕ куçа.

Ķам вилнĕ?
Ķам çав тупăкра?..

Чие сĕткенĕпе сăрланнă тухăçăн
кĕрен чĕрçи çинчи
халь-халь чăл-пар ванса каяс пек
тупăкра
выртмасть-ши эп курас телей?

## ÇУРТА

*Павел Егорова асăнса*

эп сана ӳпкелеместĕп...
тин çеç çунма
пуçланăччĕ çурта
каç сĕмлĕхне сирме
пуçланăччĕ
сасартăк
сӳнчĕ
лап

эп нимрен те тĕлĕнместĕп,
эп те сан пекех —
çурта
тен, элчел çитмесĕр сӳнĕп...

питĕ тĕттĕм-çке тулта!

## ПОЭТĂН СĔТЕЛ ÇИНЧИ БЮСЧĔ

гипс çĕрмамăкĕ пек шурă
гипс чĕр мрамор евĕр хытă

поэт чунĕ — гипс-и?
поэт сасси — гипс-и?
поэт хăй те — гипс-и?

е гипс — асаилӳ кăна?

* * *

Ĕнтĕ тусан вĕçет, тусан вĕçет.
Тӳпе тулли тусан, кĕрен кăвак тусан.
Ĕнтĕ сив çил вĕрет, сив çил вĕрет,
сив çил вĕрет, хунав-туратсене хуçса.
Ăçта хĕвел, ăçта хĕвел, хĕвел ăçта?
Тĕттĕмлĕхрен, тĕттĕмлĕхрен ăçта тарас?
Сас илтĕнет, сас илтĕнет...
Тен,
çавăнта
ăш хыпиччен, вăй пĕтиччен утса пăхас?
Тен,
çавăнта çитсессĕн тин, хĕвел çути
ман питĕме, ман куçăма çутатмĕ-ши?
Тен,
çавăнта çитсессĕн тин,
усал сив çил
ытамĕнчен-тыткăнĕнчен хăпаймăп-ши?..
Сас илтĕнен, сас илтĕнен тĕле çитсен,
каллех кĕрен кăвак тусан кăна вĕçсен,
каллех сив çил, усал сив çил кăна вĕрсен,
ăçта каяс,
ăçта каяс та мĕн тăвас?..
Тен...
чĕрене кăкăрăмран
кисрентерсе,
тăпăлтарса,
хĕмлентерсе ман кăларас?
Вара каллех,
тусанлă сив çиле çĕнсе,
мĕн ӳкиччен
сас илтĕнен енне утас?

**ХĔВĔШŶ**

Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Тен, эп кăткă? Тен, эпĕ ўпре?
Тен, çуратнă мана хĕвĕшме
кăнтăрла та çĕрле,
кăнтăрла та çĕрле?

Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Тăрăнатăп.
Ўкетĕп.
Çавах
пурпĕрех малаллах талпăнатăп —
мĕн ырри, мĕн пурри
йăлт малта пулас пек.

Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Хĕвĕшỹ.
Сылтăмми,
сулахайĕ —
йăлтах,
пĕтĕмпех, пĕтĕмпех йăлăхтарчĕ.
Чун тухать,
чун тухать хĕвĕшсех.
Хĕвĕшсех...

* * *

Тӗнче —
каҫхи хунар ҫути.
Тӗттӗмлӗхре
хунар тавра сапаланать.
Ӑна эпир чӗртмен.
Эпир ӑна сӳнтерес ҫук.
Эпир —
каҫхи хунарӑн ҫутинче
хӗвӗшекенскерсем.

* * *

Ытла хӑвӑрт тапрантӑм та —
чӗрем ыратрӗ.
Хуллен кӑна эп утрӑм та —
чунӑм чӑтмарӗ.

Сурансене пӑхмасӑрах
ҫула тухатӑп.
Ҫитеймесрен хӑра-хӑрах
таҫта васкатӑп.

## ПĔЛĔТСЕМ

Пĕлĕтсем пĕр сассăр ăсанаççĕ,
Çурçĕртен килсе, кăнтăралла.
Ман пĕрне кăна тытса чарасчĕ,
Пĕрне çеç илесчĕ ик алла.

Пĕлĕтпе ман хутăшса каясчĕ,
Çĕкленсе сас-чӳсĕр тӳпене.
Чĕреме лăплантарса тăнласчĕ
Ĕмĕрсен пăлхавлă шăплăхне.

Вара тин чунпа туйса илесчĕ —
Çуралать Илем Чĕмсĕрлĕхре.
Ман, Илем шевли пек, ирĕлесчĕ
Чăнлăх пек черчен сенкерлĕхре.

Пĕлĕтсем пĕр сассăр ăсанаççĕ,
Çурçĕртен килсе, кăнтăралла.
Куçнăçемĕн хуралса пыраççĕ,
Шăплăха сиресшĕн пулмалла.

* * *

Чĕрене усалпа тултарсассăн,
сивĕнет этем чĕри.
Сивĕнсен этем чĕри,
сивĕнет тĕнче.

Ҫăмăла курайманлăх тулсассăн,
хуралать этем чĕри.
Хуралсан этем чĕри,
тĕксĕм-ҫке тĕнче.

Пурнăҫа ултавпа тултарсассăн,
пушанать этем чĕри.
Пушансан этем чĕри,
арканать тĕнче.

## ТИНЁСРЕ

Ыталарĕ тинĕс шухă чунăма,
кăкăра пăлхатрĕ, çутрĕ куçăма.
Тем сӳнет, тем шиксĕр чĕрĕлет манра,
тарнăçемĕн тăвăр, пăчă çыранран.

Пĕлĕтсем анаççĕ лăпкă тинĕсе,
акăш пек çӳреççĕ ман тавра ишсе.
Хумсем çиййĕн хыврĕ шуçăм ылтăн çул,
илĕртсе ачашшăн: теветкеллĕ пул —

пăрахсам ишмешкĕн, çитĕ ывăнса,
элчелне, маттурăм, пар мана шанса.
Самантрах çитерĕп санăн ĕмĕтне,
çыранра тӳснишĕн курăн тивлетне...

Эй, асамçă-çутă, уссăр ан чăрман.
Тăрăшса ишмешкĕн халăм пур-ха ман.
Қирлĕ мар, шăпаçăм, санăн парнӳсем —
эп пуян: ман пурлăх — ман çĕнтерӳсем.

* * *

*Н. Лукианова*

Ҫĕлленмен иккен-ха чунăм
Ҫунĕн-ҫĕрĕн ҫуннăран.
Ҫăкăрта тулли ыр туйăм
Пурнăҫа юратнăран.

Ҫирлĕ-тĕк — ҫитет вăй-халăм
Тăвăла ҫĕнсе утма.
Ҫирлĕ-тĕк — ӳркенмĕ аллăм
Тĕрĕслĕх хĕҫне тытма.

Чулланман иккен-ха чунăм —
Ыратать вăл темшĕн те:
Ултавҫа тӳре, ав, тунă...
Ҫын шăпи ун аллинче.

Ав, суйманнине хĕсеҫҫĕ,
Элеклеҫҫĕ йĕксĕксем.
Хывăх евĕр хĕвĕшеҫҫĕ
Ир те каҫ пуш сăмахсем.

Ир те каҫ ҫӳрет каварлăх,
Инкекпе асап сунса.
Ун ҫулне пӳлет тасалăх,
Чăрсăр ҫăлтăр пек ҫунса...

Чулланмасть нихҫан та чунăм!
Вăл ялан таса, кăра.
Ҫун, хĕмлен, пăлхавлă чунăм!
Ҫун! Нимрен те ан хăра!

* * *

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.
Сӳнсессĕн пĕр, тек тивеймест чĕре,
Текех пулмасть утса таса уйпа,
Ху пуррине ху чунупа туйма.

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.
Кĕретпĕр пурте пурпĕрех çĕре.
Çак чăнлăхран тармашкăн çулĕ çук,
Ăна улăштармашкăн майĕ çук.

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре...
Ĕçĕмĕрсем çухалмĕç пурпĕрех.
Пит хĕретме ан тивтĕр мăнуксен,
Пире хутран-ситрен аса илсен.
Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.

* * *

Çич хут ӳксе, пĕр хут тăмаççĕ.
Пĕр хут тăрса, çич хут ӳкмеççĕ.
Тăраççĕ те ярса пусаççĕ,
Мал еннелле утма пуçлаççĕ.

Пĕр хут çитмесĕр çичĕ хут çитмеççĕ,
Çитмесĕрех «мухтав» темеççĕ.
Çула тухсан, вăйран кайсан та,
Вĕçне çити утма пĕлеççĕ.

* * *

Хутран-ситрен,
чун ыратсан,
эпир
(аптранăран)
ватмашкăн хатĕр
чул.

Чун
чуллансан,
ăна текех
нимпе те
ватма çук.

## ЧĔРĔП

Чĕрĕп —
тĕлĕнтермĕш —
чĕрĕ
пуласси
питĕ килнĕрен...
чунсăрлăх çамхи
пулать те тăрать.

Чунсăра
персе,
вăл
чунне
усрать.

* * *

Мĕне шанса, мĕне кĕтсе,
пĕр ăшăнса, пĕр сивĕнсе,
Çĕр çаврăнать?

Мĕне куççе, мĕне пĕлсе,
пĕр саралса, пĕр ешерсе,
Çĕр çаврăнать?

...Çаврăннине туйса, пĕлсе,
Çĕр çаврăнать.
Çĕнĕ кунне-каçне кĕтсе,
Çĕр çаврăнать.

* * *

Эп — хам тĕнче варри.
Пин-пин çыхăнупа
эп çыхăннă унпа.

Эп — хам тĕнче чури.
Тарас тесе унран,
хăш чух каяп вăйран.

Эп — хам тĕнче хуçи.
Ăна пăхăнтарма
пухатăп халăма.

Эп — хам тĕнчен тĕнчи.
Эп хам тĕнчем пекех
çухалмăп ним юлми.

* * *

Ķĕрешсе те куртăм.
Хăраса та пăхрăм.
Халь кăштах путам-и лăпкăн
шухăша.
Ķĕрешни те кирлĕ.
Хăрани те кирлĕ.
Шухăша путни те кирлĕ
хушăран.

Васкаса та пăхрăм.
Такăнса та куртăм.
Сăмсана та катрăм
шухă пулнăран.
Васкани те кирлĕ.
Такăнни те кирлĕ.
Сăмсана катни те кирлĕ
хушăран.

Ёненсе те куртăм.
Ӳкĕнсе те пăхрăм.
Юрату сӳнмерĕ пурпĕрех
чунра.
Ёненни те кирлĕ,
Ӳкĕнни те кирлĕ —
Çут тĕллев çеç çунтăр
яланах умра.

## ТУПМАЛЛИ

### *ҪУ — МАН ÇАНТАЛӐК*


«Ҫу—ман çанталăк!..» . . . . . . 5
«Суя кулăсем...» . . . . . . . . 7
«Ик енче — ик чăнлăх...» . . . . . —
«Эп — Вĕçевçĕ Голландец...» . . . . . 8
«Пин тĕрлĕ шухăш ĕшнинче...» . . . . 9
Тăван çĕршывăм, пурăнсам! . . . . . —
«Ҫайри пулма нихçан та килĕшместĕп...» . . 10
«Çур çын пек çеç ларассине пĕлсессĕн...» . . —
Таврăну . . . . . . . . . 11
«Çаран. Пăрланнă чечексен...» . . . . 12
Ҫаçкӳлĕм . . . . . . . . . —
«Ир...» . . . . . . . . . 13
«Ҫассăн-кассăн çумăр çусассăн...» . . . —
«Ырă кăмăл...» . . . . . . . 14
Телей . . . . . . . . . . —
Илемпи . . . . . . . . . 15
«Çĕр çул пурăнасчĕ...» . . . . . . —
«Çамрăк ăйăр — çамрăк кăйкăр...» . . . 16
«Такам хушнипе...» . . . . . . . —
Çĕнĕ çул . . . . . . . . . 17
«Улăм пĕрчи хуçăлчĕ...» . . . . . —
«Ятсăр сăвăçăн пĕчĕк сăвви...» . . . . 18
«Ултав...» . . . . . . . . . —
Чăваш чĕлхи . . . . . . . . 19
Геннадий Айхине . . . . . . . 20
«Икĕ сăвăç чĕри...» . . . . . . —
Акăшсен юрри . . . . . . . 21
Ман Пăлхар . . . . . . . . 23
Тупа . . . . . . . . . . 28

## *ЭП — УТРАВ, ЭС — ТИНĔС*


«Ĕнер кăна...» 31
«Çав каçхине...» —
«Сана чуптумашкăн хăюлăх çитмерĕ...» 32
«Савниçĕм, ытала мана...» —
Телей тумламĕ 33
«Чуптăвам-и сана куçунтан...» 34
«Сан ылтăн çӳçӳпе эп витĕнетĕп...» —
«Эп Илем çухалнă пуль тесеччĕ...» 35
«Пĕрлĕхен пек тутапа перĕнсессĕн...» —
«Эп — утрав...» 36
«Эс ăнтăлнă кĕрхи хурăнлăха...» —
«Килсем, килсем!..» 37
«Сана шыратăп...» 38
«Çумăр çунă чух эс килтĕн ман пата...» 39
«Хĕвел çути пек сассăр...» —
«Эс калатăн...» 40
«Кам сан пек тинкерĕ...» 41
«Куçа хупатăп та итлетĕп...» 42


## *ПУШХИРТИ ХĂЙĂР ПĔРЧИ*


«Тапăртатса тăран тур лашине...» 45
«Ăçталла каятпăр?..» —
Элеги 46
Элчел 47
«Шывра вутпуççисем ишеççĕ...» 48
«Чие сĕткенĕпе сăрланнă тухăçăн...» —
Çурта 49
Поэтăн сĕтел çинчи бюсчĕ —
«Ĕнтĕ тусан вĕçет, тусан вĕçет...» 50
Хĕвĕшӳ 51
«Тĕнче — каçхи хунар çути...» 52
«Ытла хăвăрт тапрантăм та...» —
Пĕлĕтсем 53

«Чĕрене усалпа тултарсассăн...» . . . . 54
Тинĕсре . . . . . . . . . . . . 55
«Кĕлленмен иккен-ха чунăм...» . . . . . . . 56
«Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре...» . . . . 57
«Çич хут ӳксе, пĕр хут тăмаççĕ...» . . . . . —
«Хутран-ситрен...» . . . . . . . . . 58
Чĕрĕп . . . . . . . . . . . . —
«Мĕне шанса, мĕне кĕтсе...» . . . . . . . 59
«Эп — хам тĕнче варри...» . . . . . . . —
«Кĕрешсе те куртăм...» . . . . . . . . 60

*Для старшего*
*школьного возраста*

**Валери ТУРҪАЙ**
**(Валерий Владимирович Воробьев)**

# СВЕТ РОДНИКА

СТИХИ

на чувашском языке

Редактор *А. А. Тарасов*
Художник *В. М. Ширшов*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. Н. Ҫондрашкина*
Ҫорректор *Р. П. Ҫудряшова*

**ИБ 2240**

Сдано в набор 24.03.88. Подписано к печати 21.10.88. НТ 21877. Формат $70\times90^1/_{32}$. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,34. Усл. кр.-отт. 2,56. Учетно-изд. л. 2,07. Тираж 1500 экз. Заказ № 1154. Изд. № 73.
Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

Национальная библиотека ЧР
4-031287
м 31287-нув

10 пус

*АВТОР ÇИНЧЕН*

**1961 çулта Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнел ялĕнче çуралнă. Сăвви-калавĕсем 1976 çултанпа республикăри хаçат-журналта, «Çеçпĕл çеçкисем» (1984), «Малтанхи утăмсем» (1985), «Кунçул каçалăкĕ» (1987), «Караван çурçĕрелле каять» (1986, Баку), «Середина земли родной» (1987, Мускав, «Современник») сборниксенче тата 1986 çулта Римра тухнă «Чăваш антологийĕнче» пичетленнĕ.**

**В. Туркай — Республикăри çамрăксен театрĕнче тата Чăваш академи драма театрĕнче лартнă «Телейпе юнашар», «Тараса» пьесăсен авторĕ. «Çăлкуç çути» — унăн пĕрремĕш кĕнеки.**

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ